Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

63 (7488) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи августăн (вырма) 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Юрий Михайлович Трофимов ветеброневролог районти 2-мĕш номерлĕ больницăн неврологипе терапи уйрăмĕсене ăнăçлă, пĕлсе ертсе пынипе пĕрлех вăл районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ пулнă май ял çыннисен ыйтăвĕсене те туллин татса парать.*

*Паян Юрий Михайловичăн çуралнă кунĕ. Ĕçтешĕсем, воин-интернационалистсем, юлташĕсем, сывалакансем ăна çак ятпа ăшшăн саламлаççĕ, пурнăçра ыррине кăна сунаççĕ.*

**Район администрацийĕнче**

## Хастар ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн июлĕн 6-мĕшĕнчи 321 № йышăнăвĕпе çаксене ĕçри пултарулăхшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Алексей Петрович БОРИСОВА,** «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн выльăхсене пăхса тăракан рабочине;

– **Дмитрий Николаевич ЗАХАРОВА,** районти çар комиссарĕн çумне, çар комиссариачĕн 1-мĕш уйрăм пуçлăхне;

– **Елена Анатольевна МОКИНАНА,** Шомик шкулĕн акăлчан чĕлхин учительне;

– **Иван Николаевич НИКИТИНА,** уйрăм предпринимателе;

– **Валентина Николаевна НИКОЛАЕВАНА,** Чуманкасси шкулĕн директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумне, çамрăксен канашĕн членне;

– **Марианна Сергеевна НИКОЛАЕВАНА,** Ильич яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн уй-хир бригадин рабочине;

– **Оксана Валерьевна ПРОКОПЬЕВАНА,** «Солнышко» ача сачĕн воспитательне;

– **Эдуард Александрович САВЕЛЬЕВА,** ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн ирĕклĕ майпа кĕрешессин тренер-преподавательне;

– **Светлана Николаевна ФЕДОРОВАНА,** районти «Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» муниципаллă унитарлă предприятин экономистне;

– **Егор Станиславович ЯЛУГИНА,** «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн газпа тивĕçтерекен системăсемпе усă курассин службин слесарьне.

**Вырма – 2007**

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче августăн 4-мĕшĕ тĕлне тырă вырас ĕçсем епле пынине кăтартни

**Колонкăсенче: 1.Вырма лаптăкĕ (гектарпа). 2.Вырнă (процентпа). 3. Тухăç (центнерпа). 4. Улăм пуçтарнă (гектарпа). 5. Хирте ĕçлекен комбайнсен хисепĕ.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 885 | 1 | 31,3 | – | 1 |
| “Волга” | 975 | – | – | – | – |
| “Восток” | 400 | 19 | 30,3 | 26 | 3 |
| “Герой” | 630 | 2 | 12,5 | – | 3 |
| К. Иванов яч. хис. | 383 | – | – | – | – |
| Ильич яч. хис. | 740 | 12 | 26,1 | 60 | 4 |
| Ленин яч. хис. | 895 | 3 | 20 | – | 2 |
| “Лидер” | 508 | – | – | – | – |
| “Оринино” | 777 | 22 | 24,4 | 121 | 3 |
| “Передовик” | 722 | – | – | – | – |
| “Свобода” | 1140 | 6 | 20 | 25 | 3 |
| “Сеятель” | 552 | – | – | – | – |
| Суворов яч. хис. | 820 | 9 | 34,4 | 10 | 1 |
| “Рассвет” | 1025 | 3 | 16 | – | 1 |
| “Ударник” | 1668 | 5 | 25,2 | 16 | 6 |
| Чапаев яч. хис. | 558 | – | – | – | – |
| “Чемеево” | 442 | 15 | 20 | – | 2 |
| Чкалов яч. хис. | 301 | 7 | 17,5 | – | 3 |
| Мичурин яч. хис. | 80 | – | – | – | – |
| Матвеев КФХ | 260 | 15 | 20 | 20 | 2 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **14836** | **5,2** | **24,5** | **278** | **34** |

## Суйлава хатĕрленсе



*Ĕнер пирĕн районта Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн ертӳçи Л.Н. Линик пулчĕ. Вăл район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕ.*

*Л.Н. Линик района килни ăнсăртран мар. Вăл РФ Патшалăх Думин депутачĕсен çитес суйлавне хатĕрленсе районти суйлав комиссийĕсен кадрĕсен резервĕпе семинар ирттерчĕ.*

*Семинара хутшăнакансем суйлав саккунĕсемпе паллашрĕç. Суйлав кунĕнчи лару-тăрăва куç умне кăларчĕç.*

*Юлашкинчен семинара хутшăнакансем ыйтусене хуравласа ятарлă пĕлӳ илни çинчен свидетельствăна тивĕçрĕç.*

*Сăн ӳкерчĕкре: семинара хутшăнакансем пĕлĕве ӳстереççĕ.*

**Виçĕ енлĕ комисси**

# Чи пĕчĕк ĕç укçи – 3295 тенкĕ

***Юн кун Правительство Çурчĕн Пĕчĕк залĕнче республикăра социаллă пурнăçпа ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелекен виçĕ енлĕ комиссин – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн, ЧР ĕç паракансен пĕрлешĕвĕн, профсоюз организацийĕсен республика пĕрлешĕвĕн – черетсĕр ларăвĕ иртрĕ. Кун йĕркинче пĕртен-пĕр тĕп ыйту – Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕç укçи çинчен килĕшĕве алă пусасси.***

Ку вăл, палăртрĕ ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Н.В. Суслонова, пирĕншĕн пуриншĕн те тата республика çыннисемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ тата питĕ кирлĕ ыйту. Чăваш Республикин виçĕ енлĕ комиссийĕн килĕшĕвĕпе, Раççей Федерацийĕн саккунĕпе, республика Президенчĕн Чăваш Республикинче ĕç укçине ӳстересси çинчен Указĕпе халăхăн ĕç укçине ӳстерессин тĕп тĕллевсенчен пĕри пулса тăрать. Çакă вăл çынсен пурнăç шайне лайăхлатассипе уйрăлми çыхăннă. Паян виçĕ енлĕ комисси алă пусса çирĕплетекен килĕшӳ правительствăшăн та, ĕç паракансемшĕн те, общество организацийĕсен йышĕнчи профсоюзсемшĕн те малашне пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелли тĕп документ пулса тăмалла, вăл пирĕн граждансене хӳтĕлеме тивĕç. Ăна федерацин Атăлçи округĕнче, Раççей Федерацийĕнче пуринчен малтан, Чăваш Республикинче алă пусса çирĕплететпĕр. Документ Чăваш Республикинче кăçалхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен чи пĕчĕк ĕç укçи шайне 3295 тенкĕ чухлĕ, урăхла каласан, Чăваш Республикинчи ĕçлекен халăхăн пурăнмалли чи пĕчĕк виçине çитерме палăртать. Ку цифрăна Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ. Мĕн пур предприяти тата ĕç паракансем, çав шутра бюджет тытăмĕнчи тата бюджет тулашĕнчи учрежденисем те, хăйсен çыннисен ĕç укçи шайне çав шутран кая мар палăртмалла.

Профсоюзсен республикăри пĕрлешĕвĕн ертӳçи А.В. Коршунов пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Республики Раççейре пуринчен малтан çакăн пек пысăк пĕлтерĕшлĕ документа алă пусни республикăра социаллă пурнăçа лайăхлатас енĕпе тимлĕ ĕçленине тепĕр хут çирĕплетет. Раççей профсоюзĕсем чи пĕчĕк ĕç укçи шайне Раççейре çитес çулхи раштав уйăхĕнче пурăнмалли чи пĕчĕк шая çитерме чĕнсе каланăччĕ. Чăваш Енре çак ĕçе çулталăк çурă маларах пурнăçлаççĕ. Раççейре чи пĕчĕк ĕç укçи шайне кăçалхи авăн уйăхĕнчен 2300 тенке çитерме палăртаççĕ, Чăваш Республикинче – 3295 тенкĕ. Уйрăмлăх – 44 процент. Çакна республика хăвăрт аталаннипе, социаллă политикăна çирĕп тытса пынипе пурнăçлаççĕ. Ку вăл чи пĕчĕк ĕç укçи илекенсемшĕн чăннипех пысăк пулăшу – ачасемшĕн те, апатçимĕç ытларах туянма та, пурнăç пахалăхĕшĕн те. “Эпĕ Чăваш Республикин Президентне Н.В. Федорова, Правительствăна республикăра çакăн пек ăслăтăнлă социаллă политика тытса пынăшăн профсоюзсен, ĕç çыннисен ячĕпе тав тăватăп, ĕç паракансем çак пуçарăва ырласа йышăнасса шанатăп”, – терĕ профсоюзсен ертӳçи.

Ĕç паракансен ячĕпе ЧР суту-илӳ, промышленноç палатин президенчĕ И.В. Кустарин сăмах каласа çакна палăртрĕ: килĕшӳ проектне пур енлĕн тата тарăннăн виççе-шухăшласа 4 уйăх хатĕрленĕ. Ĕç паракансемшĕн вăл куллен пурнăçа кĕртмелли тĕп документ пулса тăрĕ.

Правительство пуçлăхĕ С.А. Гапликов документ социаллă пурнăç аталанăвĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. “Кирек епле ĕçшĕн те тивĕçлĕ ĕç укçи пулмалла, – терĕ. – Кашни организаци, предприяти тата учреждени ертӳçи чи пĕчĕк ĕç укçи виçине палăртнă шайра тытса пыма тивĕç. Ку вăл патшалăх бюджет политикишĕн те, мĕн пур шайри ертӳçĕсемшĕн те тĕп выран йышăнмалла. Пирĕн паян алă пусса çирĕплетекен килĕшĕве пурин патне те – предприятисемпе организацисене, учрежденисене çитермелле, халăх хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пымалла, çав хушăрах экономикăна вăйлатмалла”.

Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕç укçине кăçалхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен 3295 тенкĕ палăртасси çинчен килĕшĕве Правительство енчен С.А. Гапликов премьер-министр, ĕç паракансен енчен И.В. Кустарин, профсоюзсен енчен А.В. Коршунов алă пусса çирĕплетрĕç.

Премьер-министр виçĕ енлĕ комисси членĕсене, документ проектне хатĕрлекенсене пархатарлă ĕçшĕн тав турĕ, малашне те ăнăçлă ĕçлеме ыр сунчĕ. “Пирĕн пурин те чи пĕчĕк ĕç укçи шайне çуллен ӳстерсе пырассишĕн тимлĕ тăрăшмалла”, – терĕ.

**«Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту»**

## Ыйтусене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ, «Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи М.А. Михайловский хуравлать

**ЫЙТУ: 45 çулхи ĕç стажĕ валли манăн 3 çул çитмест. Пенсире пулин те эпĕ 3 çул хушши район судĕн заседателĕ пулнă. Саккунпа килĕшӳллĕн çак вăхăта стажа кĕртме тивĕç. Анчах та РФ Пенси фончĕн хула тата республика уйрăмĕсенче манăн ыйтăва тивĕçтермерĕç. Мĕн сĕннĕ пулăттăр эсир мана?**

**П.И. ГОРЯЧКОВ.**
**Шупашкар хули.**

**ХУРАВ:** Халăх заседателĕнче пулнă вăхăта стажа кĕртме сирĕн РФ Пенси фондне çырупа тухас пулать. Ыйтăва тивĕçтермеççĕ пулсан вара ку йышăнăва судра татса пама тивĕç.

**ЫЙТУ: Хăй вăхăтĕнче атте мана хăйĕн пурлăхне халалласа хăварнă, ăна ман çине регистрациленĕ. Шăллăмсемпе йăмăксем ăна пайлама ыйтма пултараççĕ-и?**

**Г. НИКОЛАЕВ.**
**Çĕрпӳ районĕ.**

**ХУРАВ:** Енчен те сирĕн аçăр хăйĕн пурлăхне сире халалласа хăварнă пулсан, ăна ятарлă йĕркепе регистрациленĕ. Апла пулсан сирĕн шăллусемпе йăмăкусен пурлăха пайлама ыйтма право çук.

**ЫЙТУ: Упăшка вилнĕ хыççăн унăн перекет кĕнеки çинчи укçана епле илесси пирки каласа параймăр-ши?**

**М.В. НИКОЛАЕВА.**
**Шупашкар хули.**

**ХУРАВ:** Упăшкăр вилнĕ пирки сирĕнпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтеретпĕр. Банк вклачĕ енĕпе компенсаци илес пулсан сирĕн Перекет банкĕн уйрăмне пымалла, хăварăн упăшкан перекет кĕнекине пĕрле илмелле.

**ЫЙТУ: Енчен те эпĕ еткерлĕхпе тивĕçекен çурт-йĕр хуçи пулса тăмастăп пулсан манăн çĕршĕн, çуртшăн, газшăн, электроэнергишĕн тӳлемелле-и?**

**Л.В. СКВОРЦОВА.**
**Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа ялĕ.**

**ХУРАВ:** Физически лицосем çине хуракан пурлăх налукне пурлăх хуçисем тӳлесе тăма тивĕç. Куçман пурлăхăн харпăрлăх прави ăна регистрациленĕренпе вăя кĕрет. Эсир пурлăха еткерлĕхе куçарман, апла пулсан çуртйĕре хăвăр çине регистрацилемен пулсан, сирĕн пурлăхран илекен налука тӳлемелле мар.

**Хисеплĕ вулакансем! Сирĕнтен ыйтусене çак адреспа кĕтеççĕ: 428000, Шупашкар хули, Николаев урамĕ, 4-мĕш çурт, «Радио çурчĕ». «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» («Важный вопрос») тесе паллă тумалла.**

**Аса илтеретпĕр: «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» передачăна ĕç кунĕсенче «Раççейри радио» тата «Маяк» радио» хумĕсем çинче те итлеме пултаратăр. Ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Евгений Слепов ертсе пырать.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Муркашра пурăнакан **Людмила Калистратовна ЕГОРОВАНА** 55 çулхи юбилейпа тата **Леонилла Владимировна НИКОЛАЕВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунса çак сăвва парнелетпĕр.

Тĕлĕнтермĕш кун – çуралнă кун,
Тунти кун е ытлари кун.
Пурпĕрех асра юлать çак кун,
Çут тĕнчене килнĕ çамрăк чун.
Е хĕлле çуралнă эсĕ, е çулла,
Çуркунне е ылтăн кĕркунне –
Çирĕп ут эс пурнăç çулĕпе,
Ăлра тыт Тур панă телейне.

**Саламлаканĕсем: Муркашра пурăнакан Сорокинсен çемйи.**



Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ, нумай çул хушши «Путене» ача сачĕ» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕнче музыка ертӳçи пулса ĕçлекен **Галина Александровна МАЛЯСОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр.

Пурнăç тулăх та вăрăм пултăр. Иксĕлми вăйхал, тулли телей, хĕвеллĕ те çутă кунсем кăна, пархатарлă та çирĕп сывлăхпа ыр кăмăллăх сунатпăр сире, хисеплĕ те хаклă Галина Александровна. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем яланах пурнăçа кĕрсе пыччăр.

**«Путене» ача сачĕн коллективĕ.**



Оринин ял тăрăхĕнчи Çĕньял Оринин ялĕнче пурăнакан юратнă аттепе аннене, хуньстарикпе хунямана, асаттепе асаннене, маçакпа мамака – **Галина Ивановнапа Гурий Прохорович ИВАНОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Эсир пире пурнăç çулĕ çине кăларса пирĕншĕн нумай ырă ĕç тунине асра тытса, тав туса çак уяв кунĕнче çĕре çити пуç таятпăр.

**Салампа: хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кинĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсемпе правнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**